25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1943
ЯНВАРЬ
3
ВЫРСАРНИКУН
2(6239) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. КАЛИНИН юлташ çĕнĕ çул ячĕпе каланă сăмах

Юлташсем!

Совет Союзĕн гражданĕсем! Рабочисемпе работницăсем! Колхозниксемпе колхозницăсем! Совет интеллигенцийĕ! Хĕрлĕ Çарăн тата Тинĕс-Çар Флочĕн боецĕсемпе командирĕсем, политработникĕсем, партизансемпе партизанкăсем! Нимĕçсен фашистла оккупанчĕсем вăхăтлăха тытса илнĕ совет районĕсенче пурăнакан çынсем! Çитсе килекен çĕнĕ çул ячĕпе сире ырă сывлăх сунма ирĕк парăр.

Иртнĕ çул, юлташсем, отечественнăй вăрçă фрончĕсенчи хаяр çапăçусен çулĕ пулчĕ. Иртнĕ çулта Мускав патĕнче тата фронтăн ытти участокĕсенче нимĕçсем поражени тӳснĕ хыççăн, Гитлер хăйĕн вассалĕсене—Италие, Румынине, Венгрие тата вĕсене çитичченех халран кайнă Финляндие вĕсен мĕнпур çынсен резервĕсене нимĕç командованийĕн аллине партарчĕ, Германире хăйĕнче мĕн пухса илме май пуррине йăлтах пухрĕ, Францирен тата оккупациленĕ ытти çĕршывсенчен оккупациллĕ войскăсен чаçĕсене илчĕ, çапла майпа пухнă чăмăрпа вара кăçалхи çул пирĕн çара вĕлермеллех килсе çапма шутларĕ.

Нимĕç çарĕсем килсе çапма палăртнă тĕп енсем çинчен тата нимĕç çарĕн командованийĕн шухăшĕсем çинчен эпĕ каламастăп, вĕсем çинчен Сталин юлташ Мускав Совечĕн 1942 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнчи чаплă ларăвĕнче тунă докладра питех те лайăх кăтартса панă. Нимĕçсен командованийĕн планĕсем фашистла çаршăн вăй çитермелле мар плансем пулса тăни çинчен кăна калатăп эпĕ. Çапăçусем питех те хаяр, хăш чухне вара питех те йывăр пулчĕç. Хĕрлĕ Çар совет çĕрне паттăррăн хӳтĕлесе тăчĕ, тăшмана халран ямалла пыра-пыра çапрĕ, гитлеровецсен ирсĕр планĕсене аркатса ячĕ.

Вăрçăн иртнĕ çулхи результачĕсене пĕтĕмĕшпе тавçăрса илсен, шантарсах çакна калама пулать: паян ĕнтĕ вăрçăри лару-тăру, пирĕн çар иртнĕ çулта тăшмана вăйлăн пыра-пыра çапнă пулин те, ун чухне çак вăхăт тĕлнелле пулнă лару-тăруран пирĕншĕн чылай ăнăçлăрах.

Кăçалхи çул нимĕçсем пĕтĕм фронтра мар, кăнтăр тата кăнтăр-хĕвеланăç енĕсенче кăна наступлени туса пычĕç. Çапах та нимĕçсен командованийĕ хăй лартнă тĕллеве пурнăçа кĕртме пултараймарĕ. Нимĕçсен çарĕ вăрçă ĕçĕсем пулса пынă май питех те пысăк çухатусем тӳсрĕ, çавна пула унăн наступленири вăйĕ пĕтсе ларчĕ.

Пирĕн войскăсем Севастополе геройла хӳтĕленине пула нимĕçсемпе румынсен войскисен вуншар дивизийĕсем пĕтрĕç. Нимĕçсен Сталинград фронтĕнче кăна çĕршер пин çын вилсе тата аманса пĕтрĕç. Нимĕçсем наступлени тунă ытти енĕсенче те вĕсен çухатăвĕсем питех те пысăк. Малалла кайнă кашни километршăн нимĕçсен кăçалхи çул пĕлтĕрхинчен чылай ытларах жертвăсем тӳсмелле пулчĕ. Çав вăхăтрах Хĕрлĕ Çар тăшман войскисене хирĕçле пырса çапма вăйсем хатĕрлерĕ. Çаксене пĕтĕмĕшпе пĕрле илсен, вĕсем пуçарулăх çĕнĕрен пирĕн командованийĕн аллине куçасси патне илсе пычĕç, пирĕн командовани çав майсемпе туллин усă курассине вăраха ямарĕ те вара.

Нимĕçсен чаçĕсене Владикавказ (Орджоникидзе) патĕнче пыра-пыра çапни, эпир Сталинград районĕнче контрнаступлени туни, çав наступлени вăхăтĕнче нимĕçсене хаяррăн пыра-пыра çапни, пирĕн войскăсем Центральнăй фронтра наступлени туни, юлашкинчен, Дон шывĕн вăтаçĕрĕнчи районĕнче тата Çурçĕр Кавказра тăвакан наступлени малалла аталанса пыни Совет Союзĕпе Германи хушшинчи пĕтĕм фронтри лару-тăрăва пирĕншĕн усăллă туса хурать.

Эпир ноябрĕн 19-мĕшĕнчен пуçласа—Сталинград патĕнче, ноябрĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа—Центральнăй фронтра тата декабрĕн 16-мĕшĕнчен пуçласа—Дон шывĕн вăтаçĕрĕнчи районĕнче наступлени туса пынине пула нимĕçсем питех те пысăк çухатусем тӳсрĕç, çав çухатусем фронтăн ытти участокĕсенче те палăрмасăр юлма пултараймаççĕ.

Наступлени тунине пула нимĕçсен нумайшар пин салтакĕсене тыткăна илнĕ, фашистсен вуншар дивизийĕсене çапа-çапа аркатнă, пысăк трофейăсем: çĕршер самолетсем, пиншер танксем, орудисем, миномётсем, пулеметсем, автоматсем, автомашинăсем, миллионшар снарядсемпе патронсем тытса илнĕ. Боеприпассемпе продовольстви нумай склачĕсене тытса илнĕ.

Пирĕн чаçсем халăх пурăнакан яллă вырăнсене, район центрĕсемпе хуласене 2.000 ытла йышăнса илнĕ.

Юлташсем, иртнĕ çул пирки каласан, Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсем хушшинче патриотла туйăмсем ӳснине, общество енчен фронта паракан активлă пулăшу питех те нумай тĕрлĕ формăсемпе ӳссе пынине палăртмалла. Рабочисемпе работницăсем, инженерла-техникла персонал совет хĕçпăшалĕн пахалăхне татти-сыпписĕр лайăхлатса пыраççĕ, изделисем туса кăларас ĕçĕн процесне тăтăшах урăхлатса çĕнетсе пыраççĕ, ĕçĕн тухăçлăхне ӳстереççĕ. Çакă вара вăл пирĕн Хĕрлĕ Çара, пирĕн Тинĕс-Çар флотне хĕçпăшалсемпе боеприпассем татти-сыпписĕр парса тăма май парать.

Колхозниксемпе колхозницăсем акакан тырпулсен лаптăкне сарас, тырпулсене пухса кĕртес тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе кăçалхи çул ăспа вăя нумай хурса ĕçлерĕç. Колхоз хресченĕсен ĕçĕ сая каймарĕ—тырпул кăçалхи çул лайăх пулчĕ тата ăна вăхăтра пухса кĕртнĕ. Оборона фончĕ валли уйăрнă участоксене колхозниксем уйрăмах юратса акса ĕçлерĕç. Çав участоксем пирĕн çар валли планпа шăхнисĕр пуçне чылай нумай тырпулпа пахчаçимĕçсем пачĕç.

Юлашки вăхăтра самолетсемпе танксен колоннисем тума укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе стихийăллă кампани сарăлса кайрĕ. Сталин юлташ ячĕпе колхозниксемпе колхозницăсенчен пиншер телеграммăсем килсе тăраççĕ. Çав телеграммăсенче вĕсем хăйсем самолетсемпе танксем тума банксен отделенийĕсене укçа-тенкĕ хывни çинчен, государствăна çĕнĕрен тырпул, аш-какай тата ытти тĕрлĕ ялхуçалăх продукчĕсем пани çинчен хавасланса пĕлтереççĕ. Пĕтĕм совет халăхĕ патриотла аслă туйăмпа пурăнать. Çакна уйрăмах палăртмалла: нациллĕ республикăсемпе инçетри облаçсенчи колхозниксем центрти облаçсенчен юласшăн мар кăна мар, час-часах вĕсем хăйсем хывнă укçа-тенкипе центрти облаçсенчен иртсе те каяççĕ.

Колхоз хресченĕсем совет влаçне пĕтĕм чун-чĕререн парăнни, çулпуçа тата полководеца Сталин юлташа юратни çакăнта уççăн палăрса тăрать: султалăк çурă пынă вăрçă совет тылне вăйсăрлатмарĕ кăна мар, вăл пирĕн тыла татах та ытларах çирĕплетрĕ, нимĕç вăрă-хурахĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳре тăванла халăхсене татах та таччăнрах пĕтĕçтерчĕ.

Пирĕн интеллигенци—академиксенчен пуçласа ялти учительсем патне çитиччен—хăйĕн мĕнпур пĕлĕвĕсемпе вăйĕсене тăван çĕршыва парать. Лабораторисенче, тĕпчев институчĕсенче, заводсен мастерскойĕсенче, шахтăсемпе буровойсенче, хата-лабораторисенче тата тӳрремĕнех уйхирте, пур çĕрте те пĕр тĕллев патне туртăнакан творчествăллă хăват ялкăшса тăрать—тăшмана çĕнтерес ĕçе кашни хăйĕн вăйне парасшăн. Хăюллăнах çакна калама пулать: мĕнпур совет халăхĕ, пĕчĕккинчен пуçласа пысăкки патне çитиччен мĕнпур национальноçсем Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕшĕн, нимĕç фашисчĕсене çĕнтерессишĕн пĕрле таччăн тăрса кĕрешеççĕ.

Халăх хăйĕн çарне юратни фронта парнесем татти-сыпписĕр кайса тăнинче те палăрать. Кашни гражданин, ачасем те хăйсем Хĕрлĕ Çар боецĕшĕн тимлĕн тăрăшнине мĕнпе те пулин палăртма шутлаççĕ.

Юлташсем, кивĕ 1942 çул вĕçленчĕ. Вăл пирĕн халăх умне йывăр та кăткăс задачăсем лартрĕ, анчах та çав вăхăтрах вăл килес çул валли ырă малашлăх уçса пачĕ.

Пирĕн халăх фронта активлăнрах та активлăнрах пулăшса тăрать, çав пулăшăва татти-сыпписĕр малалла ӳстерсе пыма çĕнĕрен те çĕнĕ майсем тупать.

Пирĕн çар тăван çĕршыва çирĕп тăрса хӳтĕлес тĕлĕшпе кăна мар вăрçă опычĕ пухрĕ, вăл çакăнпа пĕрлех иртĕхсе кайнă тăшмана çирĕппĕн çапма вĕренсе çитрĕ.

Партизансене хирĕç карательнăй экспедицисем вĕçĕ-хĕррисĕр ярса тăраççĕ пулин те, партизансене пулăшакан хресченсене тискеррĕн асаплантараççĕ пулин те, партизанла движени ӳссех пырать, партизансем нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене вăйлăнрах та вăйлăнран пыра-пыра çапаççĕ.

Çакна шанса тăмалла: нимĕç фашисчĕсене хирĕç кĕрешес ĕçре союзниксен вырăнĕ ытларах та ытларах ӳссе пырĕ.

Пĕтĕм халăх, çарпа флот нимĕç захватчикĕсене пирĕн çĕр çинчен хăвăртрах хăваласа кăларас шухăш-кăмăлпа çунса тăраççĕ. Çав аслă тĕллеве пурнăça кĕртес тесе мĕнпур вăйсене, пĕлӳсемпе опыта хурар эппин, халăхсен çулпуçĕ, çарпа флотăн полководецĕ Сталин юлташ тавра таччăнрах пĕтĕçсе тăрăпăр, вара пирĕн халăх çĕнтерĕ.

Çĕнĕ çул ячĕпе салам, юлташсем!

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

ЦЕНТРАЛЬНĂЙ фронтра пирĕн войскăсем, вăйлăн штурмласа, **ВЕЛИКИЕ ЛУКИ** хулипе чугунçул узелне йышăнса илнĕ. Çав хулари нимĕç гарнизонĕ парăнма килĕшмен пирки ăна пĕтерсе тăкнă.

СТАЛИНГРАДРАН кăнтăралларахра пирĕн войскăсем **ЭЛИСТА** хулине йышăнса илнĕ.

СТАЛИНГРАДРАН кăнтăр-хĕвеланăç нерехре пирĕн войскăсем **ТОРМОСИН** ятлă район центрне йышăнса илнĕ.

Çурçĕр Кавказра пирĕн войскăсем **ЧИКОЛА** ятлă район центрне йышăнса илнĕ.

Тыткăна илнĕ тата трофейăсем тытса илнĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Хĕрлĕ Çар валли самолетсем тума

ТĂВАЙ, январĕн 2-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Сталин юлташăн саламĕсемпе хавхаланса, Хĕрлĕ Çарăн ăнăçлă наступленийĕсем çине ответлесе, «Красная Чувашия» колхоз членĕсем танксем тума укçа хывнисĕр пуçне Сталинград фрончĕ валли виçĕ боевой самолет тума 800.000 тенкĕ укçа пама йышăннă.

Тăвай МТС политотдел начальникĕ **В. ЧЕРНОВ.**

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Техно-ткацки фабрикăри рабочисене, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

Оборудованисене вырнаçтарас, фабрикăна ĕçе ярас, çĕнĕ йышши изделисем туса кăларма вĕренес тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсемшĕн техно-ткацки фабрикăри ĕçре уйрăмах палăрнă çак рабочисене, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăлас:

1. Ткачихăна Агафья Андреевна **Андреевăна.**
2. Ткачихăна Клавдия Егоровна **Барабановăна.**
3. Токаре Моисей Абрамович **Береговскине.**
4. Производствăпа техника отделĕн начальникне Арон Соломонович **Гельмана.**
5. Техникăллă контроль начальникне Соня Ароновна **Каневскаяна.**
6. Ткачихăна Мария Альбертовна **Кунстманиса.**
7. Ткачихăна Анна Львовна **Лейферовăна.**
8. Ткачихăна Манефа Николаевна **Николаевăна.**
9. Фабрика директорĕн ĕçĕсене тăвакана тата фабрикăн главнăй инженерне Яков Исаакович **Рохлина.**
10. Фабрикăн старши мастерне Басшева Лейбовна **Рутмана.**

Чăваш АССР Верховный Совет Президиум Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиум секретарĕн ĕçĕсене тăваканĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1942 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чăлха фабрикинчи рабочисене, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

Оборудованисене вырнаçтарас, фабрикăна ĕçе ярас, çĕнĕ йышши изделисем туса кăларма вĕренес тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсемшĕн чăлха фабрикинчи уйрăмах палăрнă çак рабочисене, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăлас:

1. Кетляркăна Антонина Федоровна **Андриановăна.**
2. Стюлярнăй мастерской бригадирне Михаил Михайлович **Асеева.**
3. Вязально-кетельнăй цех начальникне Марфа Александровна **Белькона.**
4. Фабрика директорне Елена Яковлевна **Богуславскаяна.**
5. Çыхакан цех мастерне Михаил Борисович **Боруляна.**
6. Çăмхалакана Раиса Ивановна **Виноградовăна.**
7. Производствăна вĕрентекен инструктора Екатерина Исааковна **Вулыха.**
8. Вязально-кетельнăй цехăн старши мастерне Григорий Степанович **Грине.**
9. Кетляркăна Устинья Гурьевна **Гурьевăна.**
10. Кетляркăна Елизавета Иосифовна **Каменецкаяна.**
11. Старши мастера Моисей Иосифович **Каменицкине.**
12. Çыхакана Федосия Никандровна **Литвиновăна.**
13. Çыхакан цехри смена начальникне Матрена Федоровна **Лукьяненкăна.**
14. Смена начальникне Лукерья Емельяновна **Мочайловăна.**
15. Механически мастерской начальникне Александр Соломонович **Штемберга.**
16. Çыхакана Полина Александровна **Яшкинăна.**

Чăваш АССР Верховный Совет Президиум Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиум Секретарĕн ĕçĕсене тăваканĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1942 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Табак фабрикинчи рабочисене, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

Оборудованисене вырнаçтарас, фабрикăна ĕçе ярас, çĕнĕ йышши изделисем туса кăларма вĕренес тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсемшĕн табак фабрикинчи уйрăмах палăрнă çак рабочисене, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăлас:

1. Сортлакан тата типĕтекен цех бригадирне Перасковья Андреевна **Герасимчука.**
2. Склад заведующине Иван Григорьевич **Зайченкăна.**
3. Главнăй механика Василий Андреевич **Кудряшова.**
4. Токаре Зинаида Ивановна **Михайловăна.**
5. Сортлакана Зинаида Михайловна **Николаевăна.**
6. Электромонтера Владимир Иванович **Николаева.**
7. Весовщицăна Екатерина Васильевна **Овчинниковăна.**
8. Весовщицăна Капитолина Ивановна **Солдатченкăна.**
9. Фабрикăн директорне Иван Николаевич **Чечеткина.**

Чăваш АССР Верховный Совет Президиум Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиум Секретарĕн ĕçĕсене тăваканĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1942 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Январĕн 1-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Январĕн 1-мĕшĕнче пирĕн войскăсем **Дон** шывĕн вăтаçĕрĕнчи районра, **Сталинградран** кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăралларахра, **Центральнăй фронтра** тата **Çурçĕр Кавказра** наступленилле çапăçусем туса пынă. Пирĕн войскăсем **Великие Луки** хулипе чугунçул узелне, **Элиста** хулине, **Тормосин** тата **Чикола** ятлă район центрĕсене тата **Нижне-Курмоярская, Валобановский, Березка, Баклановский, Жуковская, Кривской, Мало-Лучная, Степано-Разинский, Комаров, Красный Яр, Верхне-Солоновский, Нижне-Солоновский, Попов, Хазнидон** тата **Толлэгун** ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене йышăнса илнĕ.

* * *

Декабрĕн 31-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 10 танкне тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 50 автомашинине çити пĕтерсе тăкнă, сиенленĕ, артиллерин 7 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен 2 складне сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотине икĕ ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградăн заводсем вырнаçнă районĕнче пирĕн штурмлакан отрядсем, противник хирĕç тăнине сирсе ярса, 100—300 метр малалла кайнă. Тăшманăн нумай дзочĕпе блиндажне пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен 400 çити салтакĕпе офицерне вĕлернĕ, 6 пулемет, темиçе миномет тата 20 пин патрон тытса илнĕ.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн чаçсем противника атакăланă та меллĕ позицисем йышăнса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 300 вилли ытла тата персе çĕмĕрнĕ 5 танкĕ выртса юлнă. Пирĕннисем 8 пулемет, 3 миномет, 11 противотанковăй пăшал, радиостанци тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем, ăнăçлăн наступлени туса пырса, халăх пурăнакан вуншар пункта йышăнса илнĕ. Сталинградран кăнтăралларахра пирĕн чаçсем хаяррăн çапăçнă хыççăн Элиста хулине тытса илнĕ. Нимĕçсем питĕ пысăк çухатусем тӳснĕ. Старши лейтенант Дмитриев ертсе пыракан танкистсем каялла чакакан тăшмана атакăланă, 300 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă тата 12 оруди тытса илнĕ. Тепĕр участокра Н-ски чаçăн боецĕсем гитлеровецсене пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă. 400 çынна тыткăна илнĕ тата противникран юсавлă 6 танк тытса илнĕ.

* * *

Дон шывĕн вăтаçĕрĕнчи районра пирĕн войскăсем наступленилле çапăçусем туса пынă тата халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Обливская районĕнче совет чаçĕсем 50 оруди ытла, 50 автомашина, 12 трактор, 1.500 винтовка, артиллери складне, ӳпаласен 3 складне, продовольствин 3 складне, çăнăх складне, тĕштырă элеваторне, горючи складне тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. 3.000 мирлĕ совет гражданне ирĕке кăларнă, вĕсене нимĕçсем вăрçă сооруженийĕсем тума хăваласа пухнă пулнă. Н-ски чаçăн боецĕсем, малалла куçса пырса, нимĕçсен 600 салтакĕпе офицерне, 10 орудине, 15 автомашинине тата 20 лавне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем наступлени туса пынă. Вăйлăн штурмласа, пирĕн чаçсем Великие Луки хулипе чугунçул узелне тытса илнĕ. Хулари нимĕç гарнизонĕ парăнма килĕшмен пирки ăна пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра Н-ски чаçăн боецĕсем противникăн оборонин темиçе узелне йышăнса илнĕ тата нимĕçсен 200 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн нумай вилли выртса юлнă.

* * *

Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн войскăсем Чикола ятлă район центрне тата Хазнидон, Толлэгун ятлă халăх пурăнакан пунктсене йышăнса илнĕ. Çынсене тыткăна илнĕ тата трофейăсем тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн Терек урлă каçнă чаçсем противника хĕссе пырса нимĕç пехотине 2 ротăна çити тата нимĕçсен 4 орудийĕпе 4 минометне пĕтерсе тăкнă. Гварди капитанĕ Кабицкий ертсе пыракан батарея темиçе сехет хушшинче 5 станковăй пулемета пусарса лартнă тата противникăн çар грузĕсем тиенĕ 13 автомашинине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн снайперсем икĕ кун хушшинче противникăн 360 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Пирĕн артиллери 3 противотанковăй орудине, минометсен 4 батарейине, 10 автомашинăна тата çар грузĕсем тиенĕ темиçе лава пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен 26 дзочĕпе блиндажне ишĕлтернĕ.

* * *

Смоленск облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ противникăн икĕ эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Тĕрлĕ çар грузĕсем тиенĕ 12 вагон, войскăсем ларса пыракан 8 вагон, автомашинăсем тиенĕ 17 платформа тата бензин тултарнă 13 цистерна çĕмĕрĕлнĕ. Смоленск облаçĕнчи партизансен тепĕр отрячĕ нимĕçсен çар чаçĕпе çапăçнă. Çав çапăçура совет патриочĕсем 68 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

Январĕн 2-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Январĕн 2-мĕшĕ ырам тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем **Сталинградран** кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăралларахра, **Центральнăй фронтра** тата **Çурçĕр Кавказра** малтанхи енеллех наступленилле çапăçусем туса пынă.

* * *

Сталинградăн заводсем вырнаçнă районĕнче пирĕн подразделенисем темиçе çурта тата 39 дзотпа блиндажа тытса

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра).



СТАЛИНГРАДАН ХĔРРИСЕНЧИ УРАМРИ ÇАПĂÇУСЕМ. **Укерчĕк çинче:** Тăван хулана хӳтĕлекен рабочи батальонĕн боецĕсем.

(ТАСС фотохроники).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Январĕн 2-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

илнĕ: Нимĕçсен 100 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн чаçсем хаяррăн çапăçнă хыççăн противникăн вунă окопĕпе блиндажне йышăнса илнĕ. Нимĕçсем хăйсен çухатнă позицийĕсене каялла тытса илес тесе темиçе хут та контратака тунă, анчах та çав контратакăсем ăнăçман. Противникăн пехотине пĕр ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ тата нимĕçсен 7 танке пĕтерсе тăкнă. 4 танк, 21 пулемет, 85 винтовка тата 14 автомат тытса илнĕ.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăралларахра пирĕн войскăсем, ăнăçлăн наступлени туса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Нимĕçсем каялла чакнă чухне техника, тĕрлĕ хĕçпăшалсем тата çар хатĕрĕсемпе пурлăхĕсем нумай пăрахса хăвараççĕ. Халăх пурăнакан пĕр пунктшăн пынă çапăçусенче Н-ски часть нимĕçсен 300 салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ тата 135 çынна тыткăна илнĕ. 8 оруди, 17 пулемет, тĕрлĕ грузсем тиенĕ 28 автомашина тата продовольстви складне тытса илнĕ. Тепĕр участокра совет танкисчĕсем противникăн батальонне аркатса тăкнă. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 400 вилли ытла выртса юлнă. 100 çынна тыткăна илнĕ.

* * *

Дон шывĕн вăтаçĕрĕнчи районра пирĕн войскăсем наступлени туса пынă. Н-ски чаçăн боецĕсем меллĕ рубежсене хӳтĕлекен противник хирĕç тăнине сирсе янă. Çапăçура 7 танка персе çĕмĕрнĕ. Нимĕçсем каялла чакнă чухне хăй тĕллĕн çӳрекен 3 оруди, 8 миномет тата снарядсемпе патронсем нумай пăрахса хăварнă. Тепĕр участокра пирĕн мотопехота халăх пурăнакан пĕр пункта йышăнса илнĕ тата тăшманăн 230 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

* * *

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем наступленилле çапăçусем туса пынă, уйрăм участоксенче противникăн контратакисене сирсе тăнă. Пирĕн Великие Луки хулине йышăнса илнĕ чаçсем йышлă трофейăсем тытса илнĕ. Ржевран хĕвеланăçнерехри районра противникăн пысăк соединенийĕ танксем пулăшса пынипе пирĕн позицисене атакăлама темиçе хут та хăтланса пăхнă. Çав позицисене хӳтĕлекен Н-ски чаçăн боецĕсем, гитлеровецсен пур атакисене те сирсе ярса, противника хăйĕн малтанхи рубежĕсем патне хăваласа янă. Нимĕçсен 6 танкне çунтарса янă тата противникăн темиçе çĕр салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Калинин облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен 40 салтакне вĕлернĕ, шоссе çулĕ çинчи 8 кĕпере çунтарса янă тата фашистсен 11 волость управине аркатса тăкнă. Калинин облаçĕнчи партизансен тепĕр отрячĕ пĕр паха чугунçул çинчи кĕпере сирпĕнтерсе янă. Çав отрядри партизансен пысăках мар ушкăнĕ засадăсенчен персе 18 гитлеровеца вĕлернĕ тата боеприпассем турттарса пыракан 8 автомашинăна пĕтерсе тăкнă.

* * *

Аяларахра Ростов облаçĕнчи Озеры хуторĕнче нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем тыткăна лекнĕ совет çыннисемпе мирлĕ граждăнсене тискеррĕн асаплантарни çинчен çырнă акта пичетлетпĕр:

«Эпир, а'яла алă пуснăскерсем, çак акта ак мĕн пирки çыртăмăр: Ростов облаçĕнчи Озеры хуторне Хĕрлĕ Çар чаçĕсем ирĕке кăларсан эпир нимĕçсен тыткăна лекнĕ çынсем валли тунă пысăк лагерьне пăхса тухрăмăр. Çав лагерь хуторăн çурçĕр хĕрринче, виçĕ выльăх картишĕнче вырнаçнă, çав картишсем йĕри-тавра йĕплĕ пралук карса тухнă. Лагерĕн территорийĕ нимĕçсем асаплантарса вĕлернĕ мирлĕ граждăнсемпе красноармеецсен виллисемпе витĕннĕ. Гитлерла палачсем тыткăна лекнĕ çынсемпе таврари ялсенчен тытса хупнă çынсене 4 уйăх хушшинче 260 çынна выçăпа асаплантарса тата ытти майпа вĕлернĕ. Лагерьте 240 çын юлнă. Çавсенчен 100 çын ытла хăйсен вăйĕпе ура çине тăма пултарайман. Вĕсен пурин те çĕрме тытăннă сурансем пур, аллисене е урисене тăм илнĕ. Фашистла тыткăнран ирĕке тухнă Георгий Макушев, Исмаил Пыреев, Максим Мартынец, Андрей Гордеев, Иван Масырчук тата ыттисем те нумайĕшĕ çапла каласа панă: Нимĕçсем талăкра çĕр ĕçĕнче 20-шер сехет ĕçлеттеретчĕç. Лагере хупнă çынсене çăкăр кунне 100-шер грамм çеç паратчĕç тата хывăх пăтратса хатĕрленĕ пĕр кружка шӳрпе паратчĕç. Вăйсăррисене тата чирлисене гитлерла ирсĕрсем патакпа хĕнетчĕç, йăлтах халран кайнисене штыкпа чиксе вĕлеретчĕç. Лагерь территорийĕнче вилес патне çитнĕ 16 çулхи Александр Марозкина тупнă. Тӳснĕ асапсем ăна ватăлтарса янă. Унăн çӳçĕ шуралса кайнă, пичĕ пĕркеленсе кайнă. Совет врачĕсем çав ачана çăлса хăварас тесе питĕ тăрăшнă, анчах та çăлса хăварайман, вăл часах вилнĕ». Акта капитан Лапин, капитан Хованов, капитан Гаркуша, лейтенант Краснощеков, лейтенант Доронин, старши сержант Медведев алă пуснă.

Çулпуç саламне илнĕ хыççăн

УЛАТĂР, декабрĕн 31-мĕшĕ, (Телефонпа). «Красный луч» колхоз членĕсем танксен колоннисене тума малтанхи пӳхура 187 пин тенкĕ укçа хывреç. 58 çулхи колхозник Андрей Михайлович Сарсков, Ферапонт Головатый патриотран пример илсе, пирĕн земляк, Совет Союзĕн Геройĕ Орлов юлташ валли боевой самолет тума 100 пин тенкĕ пачĕ тата çавăн çинчен Сталин юлташа çырса пĕлтерчĕ. Ĕнер вăл Сталин юлташран ответлă телеграмма илчĕ. Çулпуç ăна хăйĕнчен салам калать тата Хĕрлĕ Çарăн сывлăшри вăйĕсемшĕн тăрăшнăшăн Хĕрлĕ Çар ячĕпе тав тăвать. Çулпуç саламĕпе Хĕрлĕ Çарăн тавĕ Сарсков юлташа çеç мар, «Красный луч» колхозри мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене савăнтарчĕ. Колхоз членĕсем, Сталин аттен саламлă сăмахĕсене итлеме, ватă старикрен пуçласа пĕчĕк ачасем таранах, пухăва пуçтарăнчĕç. Пуху çав тери пысăк çĕкленӳпе иртрĕ. Сталин юлташăн телеграмми çине ответлесе, колхозниксем танксен колоннисене тума татах та укçа пачĕç. Çĕнĕрен пĕрремĕш бригада 18 пин тенкĕ, виççĕмĕшĕ—12 пин тенкĕ укçа хывреç. Колхозĕпе пурĕ 50 пин тенкĕ çĕнĕрен пухса пачĕç.

Перекетленĕ укçана Хĕрлĕ Çар валли парасси ытти колхозсенче те сарăлса пырать.

КУКУШКИН,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Малта пыракан колхозсем

КАНАШ, январĕн 2-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума районра пурĕ 1.804 312 тенкĕ укçа пухнă. Пысăкрах сумма «Хĕрлĕ çăлтăр» колхоз (120.000 тенкĕ), Доронин ячĕпе тăракан колхоз (118.970 тенкĕ), Калинин ячĕпе тăракан колхоз (108.000 тенкĕ) тата «Хĕрлĕ хĕм» колхоз (103.945 тенкĕ) панă.

Хĕрлĕ Çар валли танксем тума укçа пухас ĕçре колхоз председателĕсемпе активистсем пример кăтартаççĕ: «Хĕрлĕ çăлтăр» колхоз председателĕ Антонов юлташ 25.000 тенкĕ, отечественнăй вăрçă инваличĕ, колхозник Евграфов 8,000 тенкĕ, «Мотор» колхоз счетовочĕ Дмитриев 5.000 тенкĕ хывнă.

ЗНАМЕНСКАЯ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Хĕрлĕ Çар валли самолетсем тума

КАЛИНИНО, декабрĕн 31-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Çулпуçăн саламĕпе Хĕрлĕ Çарăн тавĕ çине ответлесе, районри колхозниксемпе колхозницăсем, танксен колоннине тума укçа пухнипе пĕрлех, самолетсем тума укçа хываççĕ. Киров ячĕпе тăракан колхоз членĕсем танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 45 пин тенкĕ укçа пухса панă. Унсăр пуçне вĕсем самолетсен эскадрильйисене тума 130 пин тенкĕ хывнă.

«Знамя труда» колхоз членĕсем танксем тума 80 пин тенкĕ пухса панă. Вĕсем çав укçапа «Знамя труда» колхоз ячĕпе тăракан танк тума ыйтаççĕ.

Сталин юлташăн саламлă сăмахĕсене колхозниксемпе колхозницăсене ăнлантарса панă хыççăн Хĕрлĕ Çара пулăшас ĕç районра татах та вăйланчĕ. Декабрĕн 30-мĕшĕ тĕлне районра танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 1.650.000 тенкĕ, «Тракторист Чувашии» колоннине тума 40.935 тенкĕ тата боевой самолетсем валли 330.000 тенкĕ пухса Госбанкăн районри отделенине хывнă.

Ф. РОМАНОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Татах 35.000 тенкĕ хыватпăр

ЕТĔРНЕ, декабрĕн 31-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Машинно-тракторнăй станцинчи работниксемпе трактористсем, Сталин юлташ пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсем тата трактористсем патне янă саламлă телеграммăна сӳтсе-явнă хыççăн танксен «Тракторист Чувашии» колоннине тума малтан 30,000 тенкĕ хывни çумне хушса татах 35.000 тенкĕ пухса пама йышăнчĕç. Тракторист М. Ф. Дербенев çĕнĕрен 5.000 тенкĕ, комбайнерсем Токсубаевпа Братанов юлташсем 2 500-шер тенкĕ пачĕç.

Етĕрне МТС директорĕ ЩЕТИНИН.

Угинева юлташ Хĕрлĕ Çар фондне 25 пăт тырă хыврĕ

КАЛИНИНО. **(Телефонпа).** «Марс» колхоз членĕсен патриотизмла ĕçĕ колхозниксен кăмăлне çĕклекен паха ĕç пулса тăчĕ. Çĕршер колхозниксем хăйсен ытлашши тыррине çĕршывăн тĕреклĕхне вăйлатма Хĕрлĕ Çар фондне параççĕ.

Эльменти Пушкин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çар фондне 500 пăт тырă хучĕç. Колхоз председателĕ комсомолец Степанов юлташ 15 пăт, колхозниксем П. Ярков, Ф. Виноградова, Г. Малов юлташсем 10-шар пăт, колхозник Ф. Никитин 12 пăт хучĕç. Кунсăр пуçне Хĕрлĕ Çар валли боевой самолетсен звенине тума колхозниксем 200 пин тенкĕ ытла укçа пухса пачĕç.

«Новая жизнь» колхоз председателĕ Д. Угинева юлташ Хĕрлĕ Çарăн фондне 25 пăт тырă хыврĕ. Колхоз председателĕн примерĕпе колхозниксем те хăйсен ытлашши тыррине Хĕрлĕ Çара параççĕ. Фронтран аманса килнĕ колхозник Димитриев Хĕрлĕ Çар фондне 15 пăт, М. Исакова, М. Захарова, А. Павлова комсомолкăсем Хĕрлĕ Çар фондне кашниех 10—15-шер пăт тĕштырă хывреç.

Г. МАТВЕЕВ.

Вырăнти удобренисем хатĕрлемелли уйăхлăха хутшăнчĕç

ÇĔМĔРЛЕ, январĕн 2-мĕшĕ. **(Хамăр корр.).** «Комбайн» колхоз членĕсем тăван Хĕрлĕ Çар çĕнĕ çĕнтерӳсем туса пынă вăхăтра татах та лайăхрах ĕçлеме тăрăшаççĕ. Колхоз 1942 ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлерĕ. Авăн çапас тата пахча-çимĕçсене пуçтарса кĕртес ĕçсене вăхăтра туса ирттерчĕ, выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма тĕплĕн хатĕрленчĕ, 1943 çула государство умĕнчи пур парăмсене те парса татнипе кĕчĕ. Сăмахран, тырă памалли плана ирттерсе тултарнă хыççăн колхоз Хĕрлĕ Çар фондне 150 центнер тырă, 42 центнер йĕтĕн вăрри пачĕ.

Халь колхозниксем Суракине хатĕрленеççĕ. Вырăнти удобренисем пухса хатĕрлес тĕлĕшпе пыракан уйăхлăха активлăн хутшăнчĕç. Паянхи куна уя темиçе çĕр лав тислĕк кăларнă. Вăрлăхсене уйăрса тасатса хунă. Çитес кунсенчех ялхуçалăхĕнчи машинăсене юсаса пĕтереççĕ. 8 плуга, сӳресемпе сеялкăсене юсаса тимĕр сарайсене кĕрте лартнă. Суракино бригадăсем пĕр-пĕрипе ăмăртса хатĕрленеççĕ.

Ют çĕршывĕсенче



Укерчĕк çинче: Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен хĕвеланăç çыранĕнчи хулисенчен пĕринче вырнаçнă заводра транспорт самолечĕсене пуçтараççĕ.

Хĕрлĕ Çарăн вăрçăри ăнăçăвĕсем çинчен ют çĕршывсенче мĕн çыраççĕ

АМЕРИКА

«Дон çеçенхирĕсем — Германи планĕсен масарĕ пулса тăраççĕ»

НЬЮ-ИОРК, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри хаçатсем халь пуринчен ытла Хĕрлĕ Çарăн вăрçăри ăнăçăвĕсем çинчен çыраççĕ. Хĕрлĕ Çар чаçĕсем Котельниковăна илни çинчен пĕлтернине хаçатсенче пĕрремĕш страницăра чи курăнмалли вырăнта шултăра саспаллисемпе пичетлесе кăларнă.

«Нью-Йорк таймс» хаçат çапла çырать: Гитлер Сталинград районĕнче хăйĕн позицийĕсене пур майпа та тĕреклетме тăрăшнă. Гитлерла войскăсем хальхи вăхăтра чакса пыни нимĕçсене çуллахи наступленирен те хакла ларать. Дон çеçенхирĕсем Германин çĕнтерме шутласа тунă планĕсене тата нимĕç салтакĕсене пытарнă масар пулса тăраççĕ. Германи халăхĕ хăйĕн интересĕсене Гитлерăн захватчикла кăмăлĕшĕн парнене кӳнине вăрçăн çак иккĕмĕш хĕлĕнче тата уççăнтарах курĕ. Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсем Котельниково хулипе станцине илнине хаçат Гитлерăн планĕсем пăчланса ларнине кăтартакан япала тесе шутлать. Хĕрлĕ Çар çаплах малалла куçса пырать, тет.

«Иртнĕ хĕллехи событисем тепĕр хут пулса иртеççĕ, — тесе çырать хаçат, — анчах та ку хĕлле нимĕç войскисем каялла чакни вĕсене çапса аркатнă пек пулса пырать, çакă вăл иртнĕ хĕллехинчен уççăнтарах курăнса тăрать. Нимĕçсен вăйĕ чакнă пирки вĕсем кăçал çулла пĕтĕм фронтĕпе наступлени тăваймарĕç, кăçалхи хĕлле вĕсем канма тата хăйсен вăйĕсене çĕнĕрен ура çине тăратма пултараймĕç, мĕншĕн тесен вĕсене Хĕрлĕ Çар хĕссе пырать тата Африкăра вĕсене хирĕç союзниксен войскисем активлăн кĕрешеççĕ».

«Нью-Иорк геральд трибюн» хаçат çапла çырать: кăнтăрти фронтра нимĕçсен лару-тăрăвĕ нумай начарланнă. Вырăссем нимĕçсен питĕ паха позицийĕсем патне çывăхарса пыраççĕ, тет.

çулта кĕрешнин итогĕсем Хĕрлĕ Çаршăн лайăх пулса тăраççĕ. Противник хăйĕн тĕп тăллевĕсенчен пĕрне те пурнăçа кĕртеймерĕ. Халĕ Хĕрлĕ Çар питĕ ăнăçлăн наступлени туса пырать, тет. Хаçат уйрăмах çакна палăртса парать: Хĕрлĕ Çар чаçĕсем Котельниковăна илни фронтăн çав участокĕнче Германи войскисен лару-тăрăвне нумай начарлатать, тет.

«Таймс» хаçат та çапла çырать: Котельниково вырăссен аллине кĕрсе ӳкнипе пула нимĕçсем хăйсен питех те лайăх базине çухатрĕç, çав базăран вĕсем контратакăсем туса тăнă. Вырăссем юлашки çапăçусенче хăйсем чи йывăр условисенче те кĕрешме пултарнине тепĕр хут кăтартса пачĕç.

Рейтер агентствин вăрçă обозревателĕ генерал Губерт Гоф çапла çырать: совет войскисем çĕнтерӳллĕн наступлени туса пыраççĕ. «Çавăнпа халĕ ак çакăнтан тĕлĕнмелли çук: Англире вăрçа сăнаса тăракан çынсем, чи асăрханулăраххисем те, халĕ Гитлер питĕ пысăк поражени тӳсесси умĕнче тăнине йышăнаççĕ. Ăна уйрăмах çакă пăшăрхантармалла: хăвăрт малалла куçса пыракан совет войскисем пыра-пыра çапнипе Германи войскисен шухăш кăмăлĕсем халь пĕсăлса пыраççĕ».

ТУРЦИЯ

«Вырăссем пыра-пыра çапнипе Германи фрончĕ кисренсе ӳкет»

СТАМБУЛ, (январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Турци хаçачĕсем Хĕрлĕ Çар чаçĕсем наступлени туни çинчен нумай çыраççĕ. «Сон тельграф» хаçатăн вăрçă обозревателĕ çакна палăртса парать: «Вырăссем пыра-пыра çапнипе Германи фрончĕ кисренсе ӳкет, вырăссем вăйлăн наступлени тăваççĕ. Нимĕçсене юлашки уйăхсенче питех те тăрăшса хатĕрлесе хунă хĕллехи позицийĕсенчен хĕссе кăларнă. Укрепленисемсĕр тăрса юлнă нимĕç дивизийĕсен вăйĕ халь чакнă. Нимĕçсем хăйсен ĕçне контратакăсем туса тӳрлетсе яма шутланă, анчах та тӳрлетсе ярайман. Вырăс çарĕ ăнăçлăн малалла наступлени туса пырать. Германи войскисем умне пысăк хăрушлăх тухса тăчĕ».

«Ени сабах» хаçат хăйĕн умстатьинче çапла çырать: Хĕрлĕ Çар чаçĕсем наступлени туни «Германин кăнтăрти армийĕсем умне пысăк хăрушлăх кăларса тăратать», тет. Генерал Эркилет, Германи майлă тăнипе паллă пулса тăракан скер, «Джумхуриет» хаçатра çапла çырать: Сталинградран кăнтăралларахра нимĕçсен лару-тăрăвĕ хăрушлăланнă, вырăссем ăсталла вăйлăн наступлени тумаллине хăйсем суйласа илни нимĕçсене контратакăсем тума кансĕрлет. Çакă вăл вырăссене пуçарăва хăйсен аллинче тытса тăма май парать, тет.

АНГЛИ

«Совет войскисем çĕнтерӳллĕн наступлени туса пыраççĕ»

ЛОНДОН, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Англи хаçачĕсем Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсем наступлени туни çинчен нумай çыраççĕ.

«Дейли мэйл» хаçат. Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра 1942 çулта ĕçсем мĕнле пынине пăхса тухса, çапла калать: çак фронтра Гитлерăн планĕсене тĕппипех аркатса тăкнă. «Дейли телеграф энд морнинг пост» хаçат та çавăн пекех шутлать. Хаçат çапла çырать: Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра 1942

Турцире гитлерла суя пропаганда тунине хирĕç Турци журналисчĕ мĕн çырать

СТАМБУЛ, декабрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Турци журналисчĕ Джахид Ялчин Турцири гитлерла пропагандăна хирĕç темиçе статья çырнă. «Ени сабах» хаçатра пичетленĕ статьяра Ялчин çапла калать: нимĕçсем Турцире хăйсен агентствисен пĕтĕм системине ура çине тăратнă, çав агентствăсем Германин информаци бюровĕпе çыхăнса тăмаççĕ пулать вара. Турцире нимĕçсен Трансконтинент пресс агентстви уйрăмах активлăн ĕçлет. Агентствăсен çав серепине ăна туроксене улталама çеç тунă, тет Ялчин.

Ялчин хăйĕн тепĕр статьинче Стамбулра тухакан «Тюркише пост» ятлă нимĕç хаçачĕ иртĕнсе кайнă пирки тарăхса çырать. Анатоли агентстви нумаях пулмасть Стокгольмран пĕлтернине сарнă; çав пĕлтерӳре çапла калантă пулнă: çапăçма килĕшмен нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене пароход çине лартса Норвегирен Германие янă, тенĕ пулнă. «Тюркише пост» вăл çапла каланă: Анатоли агентстви çав пĕлтерĕве «сирсе яма» хăтланнă, çавăн пек пĕлтерни «нимĕçсене кӳрентерни пулать», тенĕ. Ялчин çакăн пирки çапла çырать: нимĕçсемшĕн, Анатоли агентствин хыпарĕ лайăх пулнă пулĕччĕ, тет.

Ялчин хăйĕн пĕр статьинче хăшпĕр турок студенчĕсене вĕренме Германие ярасшăн пулнă пирки пăшăрханса çырать. Ялчин çапла калать: нимĕç хаçачĕсем хăйсем каланă тăрăхах та, çапла туни вăл малашне Турцин ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне тапăнма май паракан каналсенчен пĕри пулса тăма пултарать, тет.

Отвĕтлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Пирĕн землякcем

Краснофлотец Степан Андреев

Хĕвел каçалла сулăннă. Блиндажсенчи боецсем каçпи хăй ĕçне тунă. Краснофлотец-автоматчик, ВКП(б) членĕн кандидачĕ Степан Андреев хăйĕн автоматне илчĕ те, юлташĕсене çапла каларĕ:

— Погранзнак патне поста каятăп,— терĕ. Писмхи хушшине гранатăсем чикрĕ, юлташĕсене алă сулчĕ те пуçне пĕкĕртсе окопсем хушшипе малалла кайрĕ.

Чикĕри знак патĕнче çав вăхăтра краснофлотец Петр Ильин постра вырăнта. Туссем пĕр-пĕрне шăппăн темĕн каланă та сăнама тытăннă.

Вĕсен нумай кĕтме лекмен. Хĕвел инçетри сопкăсем хыçне пытансанах, 25 фашист чикĕри знак патнелле шуни курăнса кайнă. Андреевпа Ильин çапла шут тунă: нимĕçсем çине автоматсенчен халех пеме тытăнмалла мар, ахальлĕн вĕсем чулсем хыçне пытанаççĕ те вĕсене вара çапса кăларма хĕнтерех пулать.

— Нимĕçсене сывăхарах пыма памалла,—тенĕ Андреев хăйĕн тусне, — вара эпир вĕсене гранатăсемпе аркатпăр.

Фашистсем краснофлотецсене чĕррĕн тытма шутланă пулмалла. Вĕсем яланхи пек шавласа мар, шăппăн шунă, автоматсем те шатăртатман. Акă вĕсем лачах çывăхра. Вĕсен тискер сăнĕсем те курăнаççĕ. 20 метр юлать... Сăнаса выртакан краснофлотецсем патне ирсĕр çĕлен-калтасем хашкаса шуни те илтĕнет. 15 метр...

Вăхăт çитрĕ. Пĕрремĕш ретри гитлеровецсен пуçĕсем çине гранатăсем вăркăнчĕç. Пĕрре, иккĕ... пиллĕк... Ушкăн-ушкăн взрывсем. Андреевпа Ильин автоматсенчен пеме тытăнаççĕ. Тăшман хăйне çавăн пек отпор парассине кĕтмен, вăл хăвăрттăн каялла ывтăннă. Краснофлотецсем фашистсен 7 вилли выртса юлнине курнă. Вĕсем блиндаж çывăхĕнчех выртнă.

Анчах та нимĕçсем лăпланман. Малтанхи ĕçĕ ăнăçсăр пулнипе тарăхса, вĕсем минометсенчен тăвăллăн пеме тытăннă. Краснофлотецсем пĕр-пĕрин умĕнче тупа тунă: пĕр утăм та каялла чакмалла мар, виличченех, юлашки сывлăш тухиччченех çапăçмалла тăван çĕршывшăн, тенĕ. Çакă вăл тăван аннемĕр — çĕршыв умĕнче, Ленин—Сталин партийĕ умĕнче тупа туни пулнă. Минăсем йывăраххăн та йывăраххăн ӳке-ӳке çурăлнă. Сасартăк Ильин окоп стени çумне тайăннă.

Вăл йывăр аманнă иккен.

Минометсен вут-çулăмĕ хаярлансах пынă. Андреевăн хулпуççине темĕн пĕçертсе илнĕ, сулахай алли халсăрланса усăннă. Çав вăхăтрах мина ванчăкĕсем краснофлотеца пыртан, хырăмран пырса çапнă. Сăвартан тухакан юн кăкăр тăрăх юхнă. Сывлама йывăрлансах пынă. Анчах халĕ те унăн пуçĕнче пĕр шухăш кăна — чикĕ хĕрринчи знак çинчен кăна пулнă.

— Тăна çухатас марччĕ çеç, пулăшу киличчен тытăнса тăрасчĕ кăна!

Минометсемпе çавăн пек вăйлă вут-çулăм тăкнă хыççăн нимĕн те чĕрĕ тăрса юлман тесе шутланă тăшман. Тăшман татах малалла шума тытăннă. Чакакан вăйне пухса, Андреев йывăррăн çĕкленнĕ те, татах фашистсен тискер сăн-пичĕсене курнă. Вĕсем çывхараççĕ... Вĕсем акă питех те çывăхра...

Вăй пĕтсех пырать. Сывлама йывăр, пуç çаврăнать, шыв ĕçес килет. Анчах Андреев хăйĕн постне пăрахмасть. Ахаль мар вăл хăйĕн тусĕ умĕнче тупа тунă. Сулахай алли унăн ĕçлеймест, сылтăм аллипе вăл сывлама çăмăлрах пултăр тесе пырĕнчи суранне тытнă. Анчах та вăл чĕрĕ, çавăнпа та вăл юлашки юн тумламĕ юлмиччченех çапăçма шутлать. Андреев, сылтăм аллине суранĕ çинчен пĕр секундăлăха илет те, юлашки вăйĕпе фашистсем çине граната пăрахать. Фашистсенчен иккĕшĕ ӳкеççĕ. Унтан татах вăркăнтарать гранатăсем. Акă ĕнтĕ 8 нимĕç хускалмасăр выртать. Гранатăсен вут-çулăмне тӳсеймесĕр, фашистсем каялла шума тытăнаççĕ. Çапла тăшманăн атаки сирĕлет. Халран кайнă краснофлотец окоп тĕпне выртать. Эпир ку вырăна пырса çитсен, эпĕ тӳрех Андреева пулăшма тытăнтăм. Вăл, хăйĕн сивĕнме пуçланă аллипе манăн алла хĕссе, кăшт илтĕнмелле çеç çапла каларĕ:

— Мана çыхма кирлĕ мар, эпĕ вилетĕп. Ильина пулăшăр. Хамăрăн боецсене калăр — эпĕ тăван çĕршыв умĕнчи хамăн тивĕçлĕхе пурнăçа кĕртрĕм. Боецсем чикĕ хĕрринчи знака сирĕплĕн тытса тăччăр.

Унтан вара юлашки сывлăшне пухса, шăппăн: — Лейтенант юлташ, манăн киле çырса ярăр, эпĕ тăван çĕршывшăн пуçа хунине пĕлтерĕр, — терĕ. Çапла алăран тытса Андреев юлташ ĕмĕрлĕхех шăпланчĕ.

Каскăсене хывса, боецсем герой ӳчĕ умĕнче шăп пулса тăчĕç. Вĕсем тăван çĕршывшăн Андреев большевик пекех çапăçма тупа турĕç.

Çакăн çинчен эпĕ сирĕн хаçат урлă республикăри çыннисене, Андреев юлташăн Красноармейски районри Вăрманкасси Алманчăри тăванĕсене пĕлтерме кирлĕ тесе шутларăм.

Лейтенант Т. ГУРЬЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, промышленность пайĕн 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф 6. 58 84 п.